И. Е. Ефимовъ.

ТАВӐТ, МӖЛӖШ, ШУРАҪ ЙУРРИСЕМ.

ПѢСНИ

деревень Таутовой, Ходяковъ и Шерашевой

ЯДРИНСКАГО УѢЗДА.

На чувашскомъ языкѣ.

ПИЛЛӖХ

И. Е. Тӑхти кӑларнӑ кӗнеке.

КАЗАНЬ.
Центральная типографія.
1911.

Тавӑт, Мӗлӗш, Шураҫ йуррисем.

ПѢСНИ

деревень Таутовой, Ходяковой и Шерашевой
Ядринскаго уѣзда.

На чувашскомъ языкѣ.

Кӗнекепе паллаштаракан сӑмахсем.

Ҫӗр ҫинҫе темиҫе ҫӗр тӗрлӗ халӑх пурӑнаҭ. Пур халӑхӑн та харпӑр хӑйӗн ҫӗлхи, тӗнӗ, йӗрки, йӑли, тумтирӗ пур. Пӗр халӑхпа тепӗр халӑха танлаштарсан, вӗсем харпӑр хӑй сӑнлӑ, уйрӑмлӑ. Акӑљҫан, хрантсус, вырӑс, ҫӑваш, нимӗҫ, вӗсем пур те ҫын, анҫах тӗрлӗ халӑх. Акӑљҫан ҫӗлхи, тӗнӗ, йӗрки, йӑли, тумтирӗ хӑй йеверлӗ; хрантсусӑн, вырӑсӑн, ҫӑвашӑн та ҫавах.

Нимӗҫсем нимӗҫле йӑмахлаҫҫӗ. Пур вырӑнти нимӗҫсен те, калаҫни пӗтӗмпе пӗр пек мар. Акӑ сӑмахран каласан, Баваріяра пурӑнакан нимӗҫем Пруссіяра пурӑнакан нимӗҫсенҫен урӑхларах пуплеҫҫӗ. Баварія нимӗҫӗсен сӑмахӗсем хӑйсен майлӑ тухаҫҫӗ, Пруссія нимӗҫӗсен хӑйсен стайлӑ. Сӑмахӗсем пурӗ те пӗр пек маршӑн, нихӑш нимӗҫе те ырлама-хурлама йӗрке килмест.

Пирӗн хамӑр ҫӑвашсен турисен вир-йалсен), анатрисен, хиртисен, уйаллисен сӑмахсем пурин те пӗр мар; ҫав сӑмахах темиҫе тӗрлӗ калаҫҫӗ. Танлаштармашкӑн „вӑл“ сӑмаха илер: турисем „вӑл“ теҫҫӗ, анатрисем „у“, хиртисем „вӑ“, уйаллисем «ӑвӑ», теҫҫӗ.

Çакă кĕнеке çиве епĕ виçĕ кӳршĕ йалсен хăш-хăш йурриселе çыртăм.

Ку кĕнекене вулакан ырă çын, ĕçе çакă йурăсене вуланă ђухне, тен, халиђђен илтмен пĕлмен сăмахсем тупăн. Çавăнпа вăл сăмахсене, ăна кĕмелле мар пеккисене, епĕ пĕлтерсе çыратăп.

Тавăт—, Мĕлĕш—, Шураç— — йал йађĕсем.
Туй-шилĕк-туй-хĕр.
Канĕ-çăмăллăх.
Пиђи-пиђђе.
Ипки-инке.
Ђĕкеç-хĕр йађĕ.
Мари-Марія.
Суйа аки-улталаннă тӳрри.
Тиийса-тесе.
Пустуй-ахаљ.
Йăлкăш-йал.
Ыр çын-пуйан çын.
Çĕрпӳ-хула.
Тийак-тийек.
Кĕрнек-илем.
Пулккă-ушкăн.
Пак-пек.
Ратни-йăхĕ.
Сентел-хăмас.
Ати-атте.

Апи—, Апай— — анне.
Карта-пахђа.
Шупашка-çӳпçе.
Ђапђушка-сăрка, алма
Кинеми-аннӳнтан аслă инкӳ.
Шăкăљђи-пĕђик хитре кайăк.
Саваť-йуратаť.
Çанашкал-çавăн пек.
Ђус пӳрт-хăма витнĕ пӳрт.
Кунĕ-йăваш.
Утнипа-утнипе.
Сала кайăк-çерçи.
Тийăр-тейĕр.
Çырăмăр-çирĕмĕр.
Муђи-аçунтан аслă пиђђӳ.
Ĕссĕр-ӳсĕр.
Кăшлиђ-кађака кĕпçи.
Варли-тӳрри.
Мамак-асанне.
Маçак-асатте.
Шăнкăрђ-арçын йађĕ.

Туй-шилӗк йуррисем.

Аӳӑр туйа, аҭасем!
Ура канне кӳрӗпӗр,
Алӑ канне кӳрӗпӗр,
Ӗҫӗпӗр те ҫийӗпӗр,
Выҫҫӑпӑр та кулӑпӑр,
Йурлӑпӑр та ташлӑпӑр.
  Ай, пиҭи, Шӑнкӑрҭ, пур;
  Ай, инки, Ҭӗкеҫ, пур;
  Суйа аки Мари пур.
И, пиҭи Шӑнкӑрҭ, пур,
Йалтан илеп тиийса,
Урарап атӑ пӑрахмарӗ;
Атӑ ҫӗтни пустуй пулҭӗ.
  И, аки Мари, пур.
  Нимрен суйа илтес ҫук-ҭӗ
  Пырап, тени хупларӗ.
Шӑнкӑрҭ ҫӑпата хуҫнӑ, тет;
Ҫӑпати сулахай пулнӑ, тет;
Ҫанпа Мари пыман, тет;
  Мари кӗпе ҫӗленӗ, тет;
  Кӗпи кӗске пулнӑ, тет;
  Ҫанпа Шӑнкӑрҭ илмен,
        тет.

Йӑлкӑш ҫулӗ вӑрӑм ҫул;
Ҫул вӑрӑмшӑн каймастпӑр,
Хӗр вӑрӑмшӑн кайатпӑр.
  Йӑлкӑш ҫулӗ куккӑр ҫул;
  Те куккӑр, те тӳрӗ,
  Епир уна пӗлместпӗр
  Ҫул куккӑршӑн каймаст-
        пӑр.
Ыр ҫын алӑкӗ тимӗр алӑк;
Алӑ тӗкмесӗр кӗтӗмӗр;
Ыр ҫын хӗрӗ пуставлӑ,
Ҫаплах илсе кайӑпӑр.
  Ыр ҫын кил-хушши ту-
        санлӑ;
  Тусан вӗҫтермесӗр кӗтӗмӗр
  Ыр ҫын хӗрӗ пушмаклӑ;
  Ҫаплах илсе кайӑпӑр.
Ҫӗрпӳ хуҫи ҫӗр хуҫа;
Ҫӗр хуҫапа мӗн тӑвас?
Пирӗн хӑта хӑй хуҫа.
Хуҫа майри тӑхлаҭ пур.
  Ҫӗрпӳ тийак ҫӗр тийак;
  Ҫӗр тийакпа мӗн тӑвас?

Пирĕн Шăнкăрҫ хăй тийак
Тийак майри Ҫĕкеç пур.
Питĕр хуçи пит нумай.
Нумай хуçапа мĕн тăвас?
Пирĕн йысни хăй хуçа;
Хуçа арăмĕ аки цур.
Сакăр вунă сакăлтак;
Ҫăхăр вунă танкăлтак.
Шăнкăрҫ пиҫи кăмăлне
Тытса ҫарăнми лашине
Çапса утми турăмăр.
Шăнкăрҫ пиҫи кăмăлне
Çĕр тенкĕлĕх лашине,
Аллă тенкĕлĕх турăмăр.
Епир туйа килĕпĕр;
Туйăн кĕрнекне кӳрĕпĕр.
Хĕр пулккинҫен уйăрса,
Арăм пулккине йертĕпĕр.
Ай, епир туйа килмесен,
Туйăн кĕрнек килес çук;
Хĕртен арăм пулас çук.
Йалттин, йалттин сикрĕмĕр,
Йалăн кĕрнекне кӳтĕмĕр,
Тем, хамăра пулас пек,
Хура шыва ӳкрĕмĕр.
Кĕрстин, кĕрстин сикрĕмĕр.
Кĕрӳ илсе килтĕмĕр
Тем, хамăра пулас пак,
Хура шыва ӳкрĕмĕр.
И, пиҫи Шăнкăрҫ, пур.
Хĕрĕх тенкĕ патăн та,
Çак тарана ес килтĕн;
Епир хамăр пулсассăн,
Икĕ çитмĕл те парас çук.
Аллă тенкĕ парас та,
Хамăр йалтан тухас мар,
Хамăр йалти пак, хитри çук
Йăлкăшра та пĕрехçех,
Вăл та пулин ларма хĕр.
Пур сар кайăк картара
Пур хитре хĕр çак йалта
Пĕрне пирĕн илес-ҫĕ,
Çак йал кĕрӳшĕ пулас-ҫĕ.
Пулас, пулас, пуласах,
Çак йал кĕрӳшĕ пуласах,
Пулас мар та ҫурăнас мар.
Çакă йалтан тухас мар.
Çăл патйи хăпарнă ҫух,
Çăл тараси каçăрлаŤ.
Пирĕн йал аҫи иртнĕ ҫух,
Çак йал хĕрĕ каçăрлаŤ.
Нăрт, нăрт кăвакал;
Ратни вĕтĕ, мĕн тăвас?
Çакă йалăн хĕрĕсен
Йăхĕ вĕтĕ, мĕн тăвас?
Кăлтăр, кăлтăр кăркка пур.
Ратни шултăра, мĕн тăвас?

Пирĕн Шураç хĕрĕсен
Йăхĕ шултăра, мĕн тăвас?
Мĕлĕш хĕрĕ мĕшĕлти;
Мĕшĕлтетсе тухаҫҫен,
Сентел-масмак тăваççĕ.
Пирĕн йал хĕрĕ пек,
Çивĕҫĕ çук;
Çак йал хĕрĕ пек
Ҫуман çук.
Çитмĕл ҫеҫек ăшĕнҫе
Çырла ҫеҫекĕ илемлĕ.
Тăхăр йал хĕр ăшĕнҫе
Пирĕн йал хĕрĕ илемлĕ.
Çакă йалăн хĕрĕсем
Ир тăраççĕ те, сертене.
Серте шывĕпе пит çăваççĕ,
Çавăнпа кăвак пулаççĕ.
Кăвак сăнлă хĕрсене
Хайсен йалĕнҫе кам илет;
Çаншăн йала кайаймаççĕ;
Урăх йалалла параççĕ.
Пирĕн Тавăт хĕрĕсем
Ир тăраççĕ те çырлана,
Çырла шывĕпе пит çăваççĕ;
Унпа хитре пулаççĕ;
Çавăнпа йалтан тухмаççĕ.
Пирĕн Шăнкăрҫ ухмаххи
Серте шывĕпе пит çунă,
Çавăнпа кăвак пулайҫĕ;
Кăвак сăнлă пулнăшăн,
Хамăр йалтан хĕр памаççĕ,
Çавăнпа килтĕмĕр çак йала
Кăвак сăнлă хĕр илме.
Пайан пире курка аври,
Ыран ирех çурла аври,
Виçмине ирех çава аври,
Кĕрет пулĕ-ха пирĕн алла.
Пирĕн атийа ма йатлас?
Çур йал таран çурҫĕ пур,
Çĕрпӳ таран çĕрĕ пур.
Ати йатне каласан,
Пире такам та хĕр парĕ;
Хамăр йата каласан,
Каҫака та парас çук.
Кăввик, кăввик кăвакарҫăн
Кăвак çунаҫĕпе мухтанаť;
Çакă Йăлкăш хĕрĕсем
Кăвак шупăрĕпе мухтанаççĕ.
Кикик, какак хур-кайăк
Шур тĕкĕпе мухтанаť;
Пирĕн Тавăт хĕрĕсем
Шур шупăрĕпе мухтанаççĕ.
Ула лаша утлантăм;
Улăх тăрăх ҫуптартăм.
Çакă йалăн хĕрсене
Сăмса тăрăх пăхтартăм.
Çак йал хĕрĕ тесессĕн,
Пар сысна кӳлех тух,

Пĕр хут татăкĕ ҫикех тух.
Тавăт хĕрĕ тесессĕн,
Пар лашуна кўлех тух,
Ҫĕр тенкĕ укҫа ҫикех тух.
Пăтпăлтăк путене
Йăви тĕлне тупмасăр,
Ҫерем ҫинҫе ҫĕр касна.
Ай, инке Ҫĕкеҫ пур;
Ашшĕ килне тупмасăр,
Мамакăшĕ патĕнҫе ҫĕр касна.
Улмуҫҫи пак ҫатрак ҫук
Ҫак йал хĕрĕ пек кутăн ҫук.
Пăтпăлтăк путене
Ыраш вырса цĕтерсен,
Ҫĕмел кутне пырать те,
Ик ҫунатне шарт ҫапать.
Ҫакă йалăн хĕрĕсем
Каҫҫа кайма тапрансан,
Шупашка кутне пыраҫҫĕ те,
Икĕ аллине шарт ҫапаҫҫĕ,
Каҫҫа кайма пăрахаҫҫĕ.
Пирĕн атийа ма йатлас?
Ҫĕр тенкĕлĕх лашине
Пире туйа парса йаҫĕ.
Тепри пулсан, парас ҫук;
Епир туйа килес ҫук
Атте лаши ултă ҫулта,
Утмăл ҫула ҫитмесĕр,
Епир туйран йулас ҫук.
Атте лаши ҫиҫĕ ҫулта,
Ҫитмĕл ҫула ҫитмесĕр,
Епир туйран йулас ҫук.
Атте лаши сакăр ҫулта,
Сакăр вунă ҫула ҫитмесĕр.
Епир туйран йулас ҫук.
Атте лаши ҫўрен лаша;
Ҫўреме лайăх ҫўрен лаша;
Ҫўреме лайăх тиийса,
Ҫĕр-ҫĕрĕпе ҫупас мар,
Атте йатне ҫĕртес мар.
Тенкĕ ырри ҫапҫушка,
Хĕрĕн ырри сар аки.
Ай, апи, ай, апи!
Кин туйанса килтĕмĕр
Утмăл купа капаҥ пек.
Ай, килеми килеми!
Сан хĕрпеле сар аҫа,
Ҫыран хĕрĕнҫе ҫырлара,
Шур ҫўркўре венҫетре.
Кăвак пуҫлă килеми
Хĕрĕ тĕлне каламасть;
Сан хĕр тĕлне кам пĕлмест,
Шурă пĕркенҫĕ кайĕнҫе.
Ҫăх ҫăмарти пĕҫĕккĕ,
Пĕҫĕккĕ те, пит тутлă.
Ҫакă йалăн аҫисем
Пĕҫиккĕ те, пит хитре.
Хур ҫăмарти пысăккă
Пысăккă та, тутлă мар.

Мĕлĕш аҧисем пысăккă
Пысăккă та, хитре мар
Пирĕн куçран мĕн пăхас?
Çӳлте çăлтăр курмани?
Ах, çырлах, хĕр куртăм,
Пыл каткинҧен тухнăскер,
Сĕтпе шыва кĕртнĕскер,
Катам пирпе тытнăскер.
Ыр çын алăкĕ вырăсла алăк;
Алă тĕкмесĕр кĕтĕмĕр;
Ыр çын хĕрĕ пушмаклă,
Çавах илсе тухрăмăр.
Ай, анне, ай, анне!
Шăкăљҧи кайăк тытрăмăр;
Çĕн кĕлете хупас-и?
Кив кĕлеге хупас-и?
Хура вăрмана хурт саваЃ;
Ҧӳркӳ ушкăнне ҧун саваЃ;
Пирĕн йала хĕр саваЃ.
Куккук килеш авăтса,
Хура вăрмана йуратса.
Епир хамăр çанашкал,
Хура хĕрсене йуратса.
Ҧарлан килет ҧарласа,
Сар ыраша йуратса;
Епир хамăр çанашкал,
Сар хĕрсене йуратса.
Уй варринҧи ват çăка,
Анне, тесе, кайрăм та,
Килех, хĕрĕм, темерĕ.
Уй варринҧи ват йуман,
Атте, тесе, кайрăм та,
Килех, хĕрĕм, темерĕ.
Вăрманта куккук авăтсан,
Вăрман улпуҧĕ хĕпĕртет.
Епир туйра йурласан,
Сар хĕр амăш хĕпĕртет.
Шăпăр, шăпăр çăмăр çăваЃ,
Ҧус пӳрт çинҧе шыв тăмасЃ.
Епир туйа тапратсан,
Хĕр аллинҧе çĕрĕ тăмасЃ.
Вĕрене çуљçи тăваткал,
Тем ҧул тăваткал пулсан та,
Тутăр туса çыхас çук.
Çав йал хĕрĕ усалли,
Тем ҧул хитре пулсан та,
Пирĕн арăм пулас çук.
Вăрман витĕр тухрăмăр,
Вĕрене çинҧен куç каймарĕ.
Йал-йал витĕр тухрăмăр,
Сар хĕр çинҧен кус каймарĕ.
Вăрман витĕр тухрăмăр,
Çĕмĕрт çинҧен куç каймарĕ.
Çак йал витĕр тухрăмăр,
Хура хĕр çинҧен куç каймарĕ.
Вăрман витĕр тухрăмăр,
Ик айккипе çĕр çырли,

Пĕрне татни пулмарĕ;
Татнă йатне илтрĕмĕр.
Çак йал витĕр тухрăмăр,
Ик айккипе сарă хĕр,
Пĕрне пăхни пулмарĕ.
Пăхнă йатне илтрĕмĕр.
Пăтпăђђăк путене
Авăтаĭ те, пытанаĭ.
Суйа йатне илтекен,
Вăтанаĭ те пытанаĭ.
Пирĕн Тавăт лупашкара;
Лупашкара пулин те,
Шупашкарăн туйăнаĭ.
Пирĕн Тавăт ту çинђе,
Ту çинђе те ђул çинђе,
Ђул хулайăн туйăнаĭ.
Пирĕн йалăн хĕрĕсем
Ура çўлтен сыраççĕ,
Майра утти утаççĕ
Çавăнпа йалтан тухмаççĕ.
Пирĕн апи питĕ кунĕ,
Суса сухан лартаĭ те,
Виçĕ пуçĕ çухалсан,
Виç кун çима памастĕ
Унта курăн куннине.
Пирĕн апи пит кунĕ,
Пирĕн апин утнипа
Йуман хăма авăнаĭ,
Çăка хăма хуçăлаĭ.
Пирĕн апин икĕ пўрт;
Икĕ пўртĕн хушшинђе
Сала-кайăк йăви пур;
Сала-кайăк тăриђђен,
Салма туса йарсассăн,
Пирĕн атийа ес йурăн.
Ађи хура, ан тийăр;
Ати карти çĕмĕртлĕх,
Çĕмĕрт нумай çырăмăр,
Çавăнпа хура пултăмăр.
Муђи пуйан кив пуйан,
Кив пуйан та кив нўхреп.
Кив нўхрепре кив сăра,
Кив сăра та, ыр сăра,
Çавăнпа ĕссĕр пултăмăр.
Хăта пуйан çĕн пуйан,
Çĕн пуйан та çĕн нўхреп.
Çĕн нўхрепре çĕн сăра,
Çавăнпа ĕссĕр пултăмăр.
Ай, апи, ай, апи!
Тухса пăх-ха тулалла,
Кии туйанса килтĕмĕр:
Ура канли кўтĕмĕр;
Уру айне тўпек хур,
Ђавсу айне çитар хур.
Пирĕн атин икĕ пўрт;
Ике пўртĕн хушшинђе
Апи пĕђђен утаĭ-ђĕ,
Халĕ иккĕн утђăр-ха.
Ай, ай, мамак, ай, мамак!
Ђепђен кайăк куртăмăр;

Нимĕн нарса та, тыттармарĕ
Салат санса тытрăмăр.
Атте каларĕ: хĕр, пăх, терĕ,
Саррине те, вăрăммине,
Тути хĕрри çӳхине,
Çӳç хĕррине кăтрине,
Сĕтне шыва кӳртнине.
Епир иккĕн пĕр тăван
Пĕр кун тухнă ђĕпĕ пек
Пĕр йарăмри шăрçа пек.
Епир вуниккĕн пĕр тăван,
Вуник пăђăр тытрăмăр,
Вуник пăђăр укçине
Ђĕн тилкепе илтĕмĕр;
Ђĕн тилкепе шартлататăй,
Хура лаша хәртлататăй.
Кай, кунтан, хура хĕр,
Санран хăрать хура лаша.
Çамрăк варли пушмакне
Кĕмĕл пăта çаптартăм,
Кĕлеткĕм пĕђиккĕ пулсан та,
Кĕлеткĕм тăрăх пăхтартăм.
Вуник çăка пĕр тĕмрен,
Тураттисем хĕвел йӳней,
Шулђисем çил йӳней;
Пирĕн лашасем кил йӳней.
Ташă кĕввп (çемми)

У-у-у-уйа, ă-у-у-уйа,
Ă-у-у-уйа, у-ă-ух-уйа,
Уйа, уйа, ăй, йай, йай,
Ăйа, уйа, ай, йай, ай, ай, йай!!!!

. . . .

. . . .

Шарт, шарт, шарт.... (Алă çупаççĕ)

. . . .

Пăтăр, пăтăр парапан...

. . . .

Тăпăр, тăпăр, тăпăртăк.
Кала шăпăрăç хытăрах.
Сикĕр, йашсем, вăйлăрах!
Куллен туй-шилĕк пулас çук.
Йалан шăпăр-сăрнай илтĕнес çук.
Йулăр, йулăр, Йăлкăшсем!
Йурланăшăн ан йатлăр,
Сăмаххи-йăмаххине каçарăр,
Пĕрле пурăнассине тавçарăр.
Ĕçчĕ-çинĕшĕн, тав,
Хĕр панăшăн, мухтав.
Айăр, кайар, Тавăтсем.
Сывă пулăр, Йăлкăшсем.